# Паттăр халăхăмăра – мухтав!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

34-35 (7777-7778) №№ ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи çу (май) уйăхĕн 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ





### ÇАР ТУСĔСЕМ! ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Атăл тăрăхĕпе Урал Хĕрлĕ Çăлтăрлă çар округĕн Çар канашĕ ячĕпе тата хамран Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ ятпа чĕререн саламлатăп.

Иртнĕ ĕмĕрĕн хĕрĕххĕмĕш çулĕсенче совет гражданĕсем хăйсен çар тивĕçне пурнăçласа массăллă паттăрлăх кăтартнă, Тăван çĕр-шыва юратнине кăтартса панă.

Çĕнтерӳ пирĕн халăхшăн çăмăл килмен. Вăрçă хирĕнче те, тылра та çынсем Çĕнтерĕве çывхартассишĕн çине тăнă. Тайма пуç сире уншăн.

Çар традицийĕсене хальхи çамрăксем малалла чыслă тăсаççĕ.

Аслă Çĕнтерӳ, халăхпа çар пĕрлĕхĕн, хуçма çук çирĕп кăмăл, паттăрлăх кунĕ ячĕпе пурсăра та саламлатăп.

**А. БАХИН,**
**Атăл тăрăхĕпе Урал çар округĕн çарĕсен командующийĕ, генерал-лейтенант.**

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Мирлĕ пурнăç, шайлашулăх тата аталану патне ăнтăлакан пĕтĕм халăха пĕрлештерсе тăракан Аслă Çĕнтерӳ уявĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Пирĕн аттесен, асаттесен, аслă асаттесен, аннесен, асаннесен тата аслă асаннесен нихăçан сӳнми паттăрлăх çути кашнин чĕрине çутатса тăрать. Вĕсем этемлĕхĕн пурнăçпа ирĕклĕхне сыхласа хăварнă, миллионшар, тĕрĕссипе миллиардшар çынна фашизмран çăлнă. Вĕсен хăюлăхпа паттăрлăхĕ, аслă ĕненĕвĕ тата хуçма май çук кăмăл вăйĕ ăрусен асĕнче ĕмĕр-ĕмĕр юлĕ. Куçпа виçейми Тăван çĕр-шыври тата тăван Чăваш Енри кашни çемьене, кашни гражданина пырса тивнĕ çак хăрушă кунсем пулнăранпа вăхăт мĕн чухлĕ нумайрах иртет, ирĕклĕхĕн таса кунне те эпир çавăн чухлĕ çуттăнраххăн паллă тума тивĕç! Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă мероприятисем те республика историйĕнче ылтăн сас паллисемпе çырăнса юласса шанса тăратăп.

Пирĕн хисеплĕ ветерансем! Эсир вăрçă çулĕсенчи пур йывăрлăхпа нушалăха чăтса ирттернĕ, юнлă çапăçусенче çĕнтерӳсем тунă, заводсенче, тылра уй-хирсенче тăрăшса ĕçленĕ, промышленноçа тата ял хуçалăхне çĕкленĕ, фронта валли апат-çимĕç парса тăнă, аманнă салтаксене сипленĕ – пĕр сăмахпа Тăван çĕр-шыва фашизмран сыхласа хăварас тесе пĕтĕмпех тунă.

Пирĕн çинчи мирлĕ тӳпешĕн, ăсталăха ӳстерме тата аталанма, цивилизациллĕ тата прогрессивлă тĕнче тума майсем туса панишĕн сире питĕ пысăк тав.

Сывлăхлă пулăр, нумай пурăнăр, пире савăнтарăр тата хăвăрăн канашсемпе те, хăвăр хутшăннипе те пулăшса пырăр. Эпир вара сирĕн шанăçа тӳрре кăларма, Çĕнтерӳçĕсен ăрăвĕн ĕçне малалла тăсаканĕсем пулма тăрăшăпăр. Пурне те ăнăçу, ырлăх-сывлăх, телей тата юрату сунатăп!

**Н. ФЕДОРОВ, Чăваш Республикин Президенчĕ.**

### АСЛĂ ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕМ, САЛТАК АРĂМĔСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ, ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Сире Тăван çĕр-шывăмăрăн Аслă вăрçинче çĕнтернĕренпе 65 çул çитнĕ ятпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир чи хаяр та хăрушă, чи аркатуллă вăрçăра Тăван çĕр-шывăмăрăн ирĕклĕхĕпе чысне, никама пăхăнманлăхне сыхласа хăвартăр, ытти çĕр-шыв çыннисемпе пĕрле Европăри нумай халăха фашизмăн пусмăрĕнчен хăтартăр. Тыл ĕçченĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр ырми-канми ĕçлени сĕмсĕр тăшмана çапса аркатма пулăшрĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн эсир тунă паттăрлăхăн пĕлтерĕшĕ татах та ытларах ӳссе пырать. Паянхи мирлĕ пурнăç, пирĕн паянхи çитĕнӳсем – йăлтах эсир, Аслă Çĕнтерӳ туса, çитĕнекен ăрăва панă парне. Тавах сире Аслă Çĕнтерӳпе паянхи телейлĕ пурнăçшăн.

Çăмăл килмерĕ Аслă Çĕнтерӳ. Пирĕн районтан кăна çак хăрушă вăрçа 9845 çын тухса кайнă. Вĕсенчен 5491-шĕ каялла таврăнайман. Эпир Тăван çĕр-шывшăн пуç хунă салтаксене асра тытатпăр, сума сăватпăр. Вĕсем ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕрере. Тăван çĕр-шывăмăршăн пуç хунă, çавăн пекех Çĕнтерӳпе таврăннă салтаксемпе тыл ĕçченĕсен умĕнче çĕре çити пуç таятпăр. Сирĕн паттăрлăхăрпа хăюлăхăр, вăй-халăрпа чăтăмлăхăр, пĕлĕвĕрпе пуян опытăр пире çитĕнӳллĕн вăй хума хавхалантараççĕ. Сирĕн ырă тĕслĕхĕр çитĕнекен ăрăва Тăван çĕр-шыва юратма, унăн пуласлăхĕшĕн яваплăха туйса ӳсме пулăшать.

Хисеплĕ çыннăмăрсем! Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм та телейлĕ, ватлăхăр канлĕ те лăпкă пултăр. Çывăх çыннăрсен юратăвĕпе чун ăшши пурнăçра вăй-хал парса пыччăр.

**Ю. ИВАНОВ, район пуçлăхĕ.**

Республикăра

## Кинофестиваль Муркаша та килет

**Шупашкарта майăн 8 – 12-мĕшĕсенче вак халăхсен кинематографне халалланă пĕтĕм тĕнчери кинофестиваль иртесси çинчен хаçатра пĕлтернĕччĕ.**

Фестиваль паян Чăваш академи драма театрĕнче 16 сехетре уçăлать.

**Паян** «Сеспель» кинотеатрта «Одна война», «Сезон туманов», «Они сражались за Родину», «Враги», «Красное небо. Черный снег» илемлĕ фильмсем кăтартаççĕ.

«Мир Луксор» кинотеатрта: «Мальтийский крест», «Остров мертвых».

**Майăн 9-мĕшĕнче**

«Сеспель» кинотеатрта: «Сынок», «Пятница, 12», «Пыль времени»...

«Мир Луксор» кинотеатрта: «Концерт для крысы».

***Муркашра 12 сехет те 30 минутра кинопа театр артисчĕпе Сергей Фетисовпа тĕл пулу райадминистрацин ларусен залĕнче пуçланать. Хыççăн «Георг» илемлĕ фильм кăтартаççĕ. Раççей тава тивĕçлĕ артисчĕ С. Фетисов кунта Никита Хрущев рольне вылять. Фильм Георгий Отс юрăç çинчен.***

**Майăн 10-мĕшĕнче**

«Сеспель» кинотеатрта: «Бубен, барабан», «День зверя», «Улыбка Бога, или Чисто одесская история».

«Мир Луксор» кинотеатрта: «Сергей Эйзенштейн. Мексиканская фантазия».

**Майăн 11-мĕшĕнче**

«Сеспель» кинотеатрта: «Скоро весна», «Специалист», «Семья».

«Мир Луксор» кинотеатрта: «Темная ночь».

**Майăн 12-мĕшĕнче**

«Сеспель» кинотеатрта: «Незабываемое», «Однофамильцы Федоровы».

Илемлĕ фильмсем кăтартассине ытти культура объекчĕсенче те йĕркелеççĕ. Тĕплĕнрех: 063 телефонпа, **www.kino.cap.ru.**

Саламлатпăр

### ТĂВАН ÇĔР-ШЫВĂН АСЛĂ ВĂРÇИНЕ ХУТШĂННĂ ХИСЕПЛĔ ВЕТЕРАНСЕМ, ТЫЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!

Сире Аслă Çĕнтерӳ кунĕпе чĕререн саламлатпăр! Паянхи ирĕклĕхпе пуç тӳпи çинчи таса тӳпешĕн сирĕн умăрта пуç тайса мĕн пур кăмăлтан тав тăватпăр. Çулсем иртнĕçемĕн эсир тунă паттăрлăхăн пĕлтерĕшĕ татах та ӳссе пырать. Эпир вара сирĕн пек чăннипех те çĕр-шыва юратма, çирĕп кăмăл-туйăмлă пулма вĕренсе пыратпăр.

Хаклă çыннăмăрсем! Сире пурне те çирĕп сывлăх, çывăх çыннăрсен ăшшипе канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта ĕçлекенсем тата вĕренекенсем.**



Юратнă ывăла, мăшăра, аттене, пиччене, кĕрĕве, йыснана – Актай ялĕнче пурăнакан **Владислав Иванович ТИХОНОВА** çуралнă кунĕ ячĕпе чĕререн ырă сунса саламлатпăр!

Утас çулу сан пултăр такăр,
Ăна çутаттăр сар хĕвел.
Сан çумăнта тус-йыш çеç пултăр,
Вăл пуринчен те кирлĕрех.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕсем, хунямăшĕпе хуняшшĕ, йăмăкĕ çемйипе, Крыловсен, Ямановсен, Порфирьевсен çемйисем.**



Юратнă мăшăра, çепĕç чунлă аннене, ырă кăмăллă асаннене, кинĕме, хисеплĕ тăвана – Атапай ялĕнче пурăнакан **Алиса Алексеевна САДОВНИКОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Пире, ачисене, ӳстерсе пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Юбилей ячĕпе саламласа сана юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтсем çитсе пыччăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр, ачусемпе, мăнуксемпе савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, мăнукĕ, кинĕ, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă мăшăра, аттене, ывăлăма, пиччене – Ярапайкасси ялĕнче пурăнакан **Георгий Григорьевич СИДОРОВА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Кĕрекӳ яланах тăвансеме пуян пултăр. Пурнăçунта пĕтĕм ыррине кăна сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, Мышевсен, Яшковсен, Гордеевсен, Николаевсен çемйисем тата ачисем.**

Чун-чĕререн юратнă аттепе аннене, хуньстарикпе хунямана, кукаçипе кукамая, мамакпа маçака – Анаткас Апаш ялĕнче пурăнакан **Мария Дмитриевнăпа** Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранне **Леонид Никитич НИКИТИНСЕНЕ** – Аслă Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă ятпа, пĕрлешнĕренпе 56 çул çитнĕ ятпа саламлатпăр. Тавах сире ырă кăмăлшăн. Эпир сире, хисеплĕ çыннăмăрсем, канлĕ ватлăх, çирĕп сывлăх тата нумай çул пурăнма вăй-хал сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: пилĕк хĕрĕ, кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, вун тăватă мăнукĕ, пилĕк кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**

Уява – ĕçри ӳсĕмсемпе

## ХАСТАРРИСЕНЕ – ТАВ!

***Ĕç ăнăçлăхĕ унта хутшăнакан çынсен тăрăшулăхĕнчен, ертӳçĕсемпе специалистсем хăйсен тивĕçĕсене ăнланнинчен, ответлăха туйнинчен нумай килет. Çакна кăçалхи çур акире те уççăнах куратпăр. Агротехникăна пăхăнса ĕçлекенсем кĕске вăхăтра (çу уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне) çуртрисем акас ĕçе вĕçлерĕç. Вĕсен шутĕнче Ильич яч. хис. (ертӳçи И. Николаев), «Оринино» (Ю. Шишокин), Чкалов яч. хис. (П. Ефимов), «Колос» АПФ (М. Лукоянов), «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционерлă пĕрлешӳ (Н. Ванеркин).***

***Асăннă хуçалăхсенче ака ĕçĕсене хутшăннă ĕçченсене Çĕнтерӳ кунĕ умĕн тунă çитĕнӳпе саламлатăп, çур акири ытти ĕçсенче те ырă тĕслĕх кăтартасса шанатăп.***

**Ю. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## Ырăпа палăраççĕ

***Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи обществăлла вырăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем черетлĕ хĕл кунĕсене хыçа хăварнипе пĕрлех 2010 çулăн çĕнĕ ӳсĕмĕсене алла илме пуçларĕç. Вĕсен ĕçĕ пирĕн тăрăхра та ӳсĕмлĕ вăй хума хушма резервсем пуррине кăтартса парать.***

***Черетлĕ ял хуçалăх çулĕн малтанхи 4 уйăхĕ хыçа юлчĕ. Çĕнтерӳ кунĕ умĕнхи пĕтĕмлетӳ пирĕн кăçалхи шанăççене уçса кăтартать. Вĕсем вара пĕчĕк мар. Кăна вулакансем хăйсем хак паччăр тесе январь-апрель уйăхĕсенчи чи сумлă кăтартусемпе паллаштаратпăр.***

**Сĕт сăвасси.** Асăннă тапхăрта 100 га çĕр пуçне район вăтамран 99,6 ц сĕт сурĕ пулсан, «Герой» (579,3 ц), Ильич яч. хис. (238,4 ц), Суворов яч. хис. (210,7 ц), «Оринино» (188,6 ц) хуçалăхсен кăтартăвĕсем самай сумлă. Суворов яч. хис. хуçалăхра çак вăхăтра пĕр ĕне пуçне вăтамран 2112 кг сĕт сума пултарчĕç. Çак хуçалăхри Ф. Антоновăпа Н. Журавлева дояркăсен ĕç кăтартăвĕсем – 2800 кг.

«Ударник» хуçалăхри Панклири ĕне ферминче те (заведующийĕ Л. Трофимова) вăтам сăвăма 2201 кг çитерчĕç. Кунти В. Трофимовăпа З. Андреева çак хушăра кашни ĕнерен 2333-2239 кг сĕт сума пултарчĕç.

**Аш-какай туса илесси.** 4 уйăхра район усă куракан 100 га çĕр пуçне вăтамран 14,8 ц аш-какай туса илнĕ. Çав вăхăтрах «Герой», «Восток», «Оринино», Суворов яч. хис. хуçалăхсен ӳсĕмĕсем – 67,1–30,5 ц.

Асăннă тапхăрта «Герой» хуçалăхри самăртма хупнă сыснасем талăксерен вăтамран 574 г ӳт хушнă. Суворов яч. хис. хуçалăхра – 549 г.

Мăйракаллă шултра вырăха самăртас ĕçре те маларах асăннă хуçалăхсемех ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ. Суворов яч. хис. хуçалăхри ĕне вырăхсем талăксерен 1050 г, «Оринино» – 965 г, «Свобода» – 958 г, «Восток» 949 г ӳт хушнă.

**Çурасем илесси.** Иртнĕ 4 уйăхра «Свобода» хуçалăх пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 46 пуç ытларах сысна çури илсе пĕтĕмĕшле хисепе 1495 çурана çитерчĕ. Çак ĕçре Г. Суриков (355 çура), Р. Арапкина (288), Е. Тихомирова (268) ĕçченсем малта пыраççĕ.

**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ.**

## Ĕç шавĕ лăпланмасть

Çĕнтерӳ 65 çул тултарнă куна районти çĕр ĕçченĕсем хĕрӳ çур акире кĕтсе илеççĕ. Ĕçсем самантлăха та чарăнмаççĕ. Çакă хресчен çур акине тĕплĕ хатĕрленни пирки калать. Çу уйăхĕн 7-мĕшĕ тĕлне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тырă-пулăна 9190 гектар çинче акнă. Пĕр çул ӳсекен курăксене акнă лаптăксем 685 гектар (40 процент) йышăнаççĕ. Хуçалăхсенче 5 гектар (9,1 процент) пахча çимĕç, 22 гектар (36 процент) тымар çимĕç акнă.

Ĕçсем малалла пыраççĕ.

**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн сотрудникĕ.**